# "Униче картинчи кĕмĕл сас..."



Унăн вил тăприйĕ те çук, чечек хума палăкĕ те çук, çапах та вăл кĕвĕленĕ сăвва-юрра Чăваш Енре пурăнакансем кăна мар, тĕнчери тĕрлĕ халăх итлесе киленет. Хăй вăхăтĕнче вăл чăваш халăх хорне йĕркеленĕ те Мускавра "Уйăх-паркра" пурне те шалт тĕлĕнтерекен чаплă концерт панă, мĕнпур тĕнчене чăвашсем пуррине, вĕсен культури çӳллĕ шайра пулнине ĕнентернĕ. Ăмăртура виççĕмĕш вырăн йышăннă. Çакăн хыççăн чăваш хорне пултарулăхне кура правительство çуртне концертпа пыма йыхравланă. Эпĕ хам та, унăн ентешĕ, тапса тăракан çăлкуç пек талант умĕнче пуçăма таятăп, пултарулăхĕпе мăнаçланатăп.

Чăвашсен пирвайхи композиторĕ Федор Павлович Павлов Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ятлă ялта 1892 çулта авăнăн 25-мĕшĕнче вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Пултарулăхпа илем тĕнчине каймалли çула ялти чаплă сĕрме купăсçăран Лавруш пиччерен вĕренсе такăрлатма пуçланă. Ун патне час-часах юрă итлеме çӳренĕ вăл. Хветкен (Ф.Павлова ача чухне ялта çапла чĕннĕ) ашшĕ те, Çтаппан Павăлĕ, кĕсле калама, ташлама ăста çын пулнă.

Пулас композитор ялти пуçламăш шкулта, каярахпа Иккассинчи икĕ класлă училищĕре тата Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ăс туптанă.

Ф.Павлов пултарулăхĕ тĕрлĕ енлĕн палăрнă: музыкăра, драматургире, критикăра, публицистикăра, поэзипе ăслăлăхра... Унсăр пуçне вăл иртнĕ ĕмĕрĕн çирĕммĕш çулĕсенче область шайĕнчи юрист та пулнă.

Шел те, хальлĕхе паллă ентешĕмĕр çуралса ӳснĕ çурт тĕлĕнче асăну чулĕ кăна выртать. Ăна Ф. Павлов çуралнăранпа 100 çул çитнине паллă тунă тапхăрта хунăччĕ. Халĕ те асрах 1992 çулхи авăн уйăхĕ. Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел ялне паллă композитора сума сăвакансем йышлăн пуçтарăннăччĕ. Асăну чулне хунă самантра манăн та пуçра акă еплерех йĕркесем шăранса тухнăччĕ:

ПУÇТАЙĂМ

Кун кĕвви пек юррусемшĕн
Пуç таять пур халăх,
Çирĕп чул хурса çĕклесшĕн
Çĕнĕ, чаплă палăк.

Унтанпа икĕ теçетке çул иртрĕ ĕнтĕ, анчах асăну палăкĕ çĕкленеймерĕ-ха. Çак çитменлĕхшĕн эпĕ хама та айăплă туятăп. Çапах та Ф. Павлов манăçа тухнисен йышĕнче мар. Унăн ырă ячĕ тăван халăх асĕнчен тухмасть, сăвви-юрри те çитĕнекен ăрăвăн чĕлхинчен каймасть: "Илемлĕ, илемлĕ, илемлĕ чăваш юрри. Илемлĕ чăваш юрри те юрлама пĕлсен кăна..." Асăннă йĕркесем чăвашлăх ытарĕ пек янăраççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, Ф. Павловăн палăкĕ пур! Вăл – чăваш юрри! Çак палăка вăл хăй аллипе, пултарулăхĕпе хăй пурăннă чухнех лартса хăварнă. Вăл йĕркеленĕ Чăваш патшалăх юрăпа ташă ансамблĕ паян ăçта кăна çитсе хăй пултарулăхне кăтартмасть-ши? Унăн репертуарĕнче Ф. Павлов юррисем те чылай. Апла пулсан паллă ентешĕмĕр – пирĕн хушăрах, вăл юттисемпе пĕрлех тăван халăх чысне çĕклессишĕн ĕçлет, кĕрешет. Калана шухăшăн пĕтĕмлетĕвне "Пуçтайăм" сăвăра эпĕ çапларах вырнаçтарнăччĕ:

Пăрчăкан пек кунĕн-çĕрĕн
Пĕр канми ĕçлерĕн.
Ĕнчĕ сасă пĕрчĕн-пĕрчĕн
Пухрăн, кĕвĕлерĕн.

Ереветлĕ юрă-çемĕ
Çĕнелсе шăранчĕ,
Ĕмĕр витĕр сас мерченĕ
Уççăн ярăмланчĕ.

Асăну кĕвви янратăр,
Килĕр, итлĕр, курăр!
Палăк никĕсĕ чулран та,
Кÿлепи ун – юрă. (Çĕрпÿ районĕ, Патăрьел, авăн, 1992 ç.)

Юлашки вăхăтра наци çыхăнăвĕ сĕвĕрĕлни общество пурнăçне сăтăр кÿме пуçларĕ. Глобализм, асфальт саракан машина пекех, пĕтĕм тĕнчери çĕр пин халăхăн çĕр пин чечекрен тăракан хăйне евĕрлĕ илемне пĕрешкел виткĕçпе хуплама пуçларĕ. Хăйнеевĕрлĕхне çухатса пыракан халăхăн чунĕ те таптанса хытать. Çакă çитĕнекен ăрăва чи малтан сиен кÿрет, этнос тымарне вуллинчен уйăрать, ăрусен çыхăнăвне татать. Кунашкал лару-тăрура Ф.Павлов пек халăхăмăрăн мăнаçлăхне çÿле çĕклекен ентешĕмĕрсене асра тытманни мăн çул варринчи асфальт айне пулса юлнипе тан.

Астăватăп, иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсен вĕçĕнче эпĕ Ф. Павлов пурнăçне тĕпе хурса "Чĕкеç пехилĕпе" поэма çырма пикеннĕччĕ. Çырав материалĕ сахалраххине пула Иван Ахрат çыравçăпа çыхăнтăм. Ку вăхăт тĕлне эпĕ унăн "Кăвак

ҫутӑ килсен" кӗнекипе паллашнӑччӗ ӗнтӗ. Унта Ф. Павлов пурнӑҫӗпе пултарулӑхне халалланӑ повесть те пурччӗ. И. Ахратпа калаҫни пысӑк усӑ кӳчӗ. Вӑл хӑй вӑхӑтӗнче Ф. Павловпа пӗрле Чӗмпӗр шкулӗнче вӗреннӗ Капитолина Эсливановнӑпа ҫыру ҫӳретнӗ иккен. Мана ҫав ҫырусемпе паллаштарчӗ. Тата ытти материал та чылай тупӑнчӗ. Поэмӑна ҫырма пулӑшнӑшӑн Иван Ахрата пысӑк тав. Аслӑ ӗҫтешӗмӗрӗн йывӑр тӑпри ҫӑмӑл пултӑр ӗнтӗ.

Чӗмпӗрти Чӑваш шкулӗнче вӗреннӗ тапхӑрта Капа Эсливановӑпа Хветке хушшинче таса юрату тӗвӗленнӗ. Питӗ шел, Ф.Павловӑн пирвайхи юратӑвӗ телейсӗр вӗҫленнӗ, К.Эсливанова урӑх ҫынна качча тухнӑ. Ҫак телейсӗр самант Ф.Павлов пурнӑҫӗпе пултарулӑхӗнче тӗлӗнмелле пысӑк вырӑн йышӑннӑ. Шӑпах Капӑшӑн тунсӑхланӑ вӑхӑтра вӑл, ырату вутӗнче ҫунакансker, тарӑн шухӑш авӑрне пуҫӗпех путнӑ, хӑйӗн чи чаплӑ хайлавӗсене ҫырма, ыратӑва ӗҫре пусарма пикеннӗ:

Яш ӗмӗте ырату чулӗ хуҫрӗ-тӗр –
Пуш пӳлӗме Хӗветке хупӑнать.
Чун тӑвӑнни пултару вӑйне куҫрӗ-тӗр –
Хӗлӗхӗн янкӑс сасси уҫӑлать.

Мӗн каласа сӗрме купӑс хӳхлерӗ-ши?
Пӗр хӑй кӑна калама пултарать.
Туйӑм вӑйне виҫекен кӗвӗ пулчӗ-ши?
Кам юрататъ,
Ҫав хакне палӑртать. ("Чӗкеҫ пехилӗпе" поэмӑран)

Чӑн та, ҫамрӑк чӑваш каччи "тарӑн ҫырмара тӗмсӗлекен чечеке" тимлӗн сӑнать. Ҫав илеме ӑнӑҫу сунса эреветлӗ чӗкеҫле малалла вирхӗнет, нишлӗхре хӗн куракан халӑхӑмӑрӑн ҫепӗҫ сӑвви-юррине тӗнче умне кӑларас ӗҫе кӳлӗнет. "Халӑхӑн хавхине архивра шырама кирлӗ мар, ӑна чӗрӗ ҫынсенчен пӗрчӗн-пӗрчӗн пухса илмелле", – шӑпах ҫак тӗллевпе вӑл тӑван халӑхӑмӑрӑн ӗмӗрсем хушши упраннӑ сӑвви-юррине илемлетсе халӑха тавӑрса пама пуҫлать. Пӗлӳ шайӗ пӗчӗкреххине туять вӑл. Ҫавӑнпа малалла вӗренме ӗмӗтленет. 38 ҫула ҫитнӗскер Ленинградри консерваторие вӗренме кӗрет. Ҫулталӑк вӗренсен йывӑр чирленӗскер Сочие сывалма каять. Унта 1931 ҫулта унӑн пурнӑҫӗ татӑлать. Анчах вӑл, туйӑмлӑ юрӑ-кӗвӗ ӑсти, яланах пирӗн асра пурӑнать, хайлавӗсем те пурнӑҫа илемлетеҫҫӗ, хастарлӑх кӳреҫҫӗ. Е сӑвӑ чӗлхипе каласан:

Униче картинчи кӗмӗл саслӑ тевет
Пин-пин ҫынлӑ йышра ҫухалмарӗ.
Вӑйӑ пуҫӗ пулса тӗнчене илӗртет
Пултаруллӑ чӑваш хӗрӗ-арӗ.

**Николай ИШЕНТЕЙ,**
**Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ премин лауреачӗ**